25-мěш çул тухать. Хакě 15 пус.

Пěтěм тěнчери пролетарисем, пěрлешěр!

1942
АВГУСТ
26
ОНКУН
199(6134) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĚН ХАÇАЧĚ

Уборка тата вырăнти хаçатсем

Тырпулсене ăнăçлăн пухса кěртме тата ялхуçалăх продукчěсене хатěрлеме мěнпур вăйсене мобилизацилесси халхи вăхăтра пирěн пичет умěнче тăракан чи пысăк задачăсенчен пěрни пулса тăрать. Районсенчи хаçатсен редакцийěсем тăрăшса ěçленě çěрте хаçатсем чăннипех те коллективлă организаторсем, коллективлă агитаторсем пулса тăраççě, уборкăра тимлěн ěçлеме колхозниксемпе колхозницăсене мобилизацилесе пыраççě.

Тăвай районěнчи «Большевикла колхозшăн» хаçат тырпулсене пухса кěртес, государствăна тырă парас ыйтусене тăтăшах çутатса пырать. Колхозсем тырă вырма тухсанах, çак хаçат «Хěрлě Сормово» колхозра уборкăна мěнле организацилени, колхозниксемпе колхозницăсем социализмла ăмăртса ěçлени, колхозсенчи малта пыракан бригадăсем мěнле ěçлени çинчен çырнă. Çапла хаçат лайăх ěçлекенсен опычě тăрăх ěçлеме ытти колхозниксене те вěрентсе пынă. Уйхирти ěçсем мěнле пыни çинчен çырнипе пěрлех, ку хаçат колхозсем государствăна тырпул парас ěçе хутшăннине те çутатнă. Хаçат «Хěрлě Октябрь» колхозăн председателě М. Михайлов çырнă «Ěçěн хăвăртлăхне ÿстерсе пыратпăр» ятлă статьяна пичетлет. Колхоз уборкăри ěçсене мěнле туса пыни çинчен, 1942 çулшăн ыраппа тулă государствăна парса тани çинчен çырса, Михайлов юлташ: «Çавăн пекех ытти культурăсем енěпе те хамăр обязательствăсене срокченех пурнăçлатпăр», тесе калать. Августăн 8-мěшěнче çак хаçат Хучелти Мичурин ячěпе тăракан колхоз хатěрлев пунктне 52 центнер тырă леçсе пани çинчен çырать. Ку хаçат çине уборка ыйтăвěсемпе колхоз председателěсем, бригадирсем, комсомолăн пуçламăш организацийěсен секретарěсем тата ыттисем те çыраççě. Çавна май хаçат районри пурнăçăн тěрлě енěсене çутатса пырать, черетри задачăсене пурнăçа кěртесси çинчен вăхăтра çырса тăрать.

Анчах пирěн районсенчи хаçатсемпе стена хаçачěсен ěçěнче çитменлěхсем нумай-ха. ВКП(б) Центральный Комитечěн пропагандăпа агитаци Управленийě тырпулсене пухса кěртессипе ялхуçалăх продукчěсене хатěрлесси тата вырăнти пичетěн задачисем çинчен уборка пуçланнă вăхăт тěлнех янă çыруран хаçатсен задачисене кăтартса панăччě. Çав задачăсене чылай хаçатсем кирлě пек пурнăçа кěртсе пыраймаççěха. Çапла, хăшпěр хаçатсем ялхуçалăх ыйтăвěсемпе сахал çыраççě, ялсенчен тата колхозсенчен çырса тăракансен йышне пысăклатма тăрăшмаççě. Чкаловски районри «Коммунизм байрагы» хаçатăн юлашки номерěсене илсе пăхăрха. Августăн 13-мěшěнчи номерте хаçат уборка çинчен пěр страница çырать. Унта «Кěлтене капана хывас тата авăн çапас ěçсене кая хăвармалла мар» ятлă умстатья, «Кунне-çěрне пěлмесěр ěçлесе, малта пыракан колхозсемпе танлашассишěн кěрешмелле» ятлă статья пичетленнě. Вěсене кам çырни паллă мар—редакци статьисем пулмалла, кунтах хаçат редакторě В. Кузьмин çырнă «Хěрлě Çар воинěсем колхозниксене шаттăррăн ěçлеме чěнеççě» ятлă статья тата Молотов ячěпе тăракан колхозăн председателě Кузнецов юлташ çырнă «Ěç нормисене тултарман колхозник çук» ятлă статья пур. Çапла, пěр страницăра тăватă статья, вěсенчен виççěшне редакци çырнă, пěр статьине кăна корреспондент çырнă. Паллах ěнтě, çак статьясенче колхозсен пурнăçне тěплěн пěлсе çырни курăнмасть, вěсенче цифрăсем кăна. Çак хаçатăн августăн 20-мěшěнчи номерěнче вара уборка çинчен пěр заметка çеç пичетленнě.

Уборкăна ирттерме çěрте черетлěх пулмалла мар. Тырă вырса пынă вăхăтрах авăн çапмалла, государствăна тырă памалла, кěрхи тырăсене акса пěтермелле. Районри хаçатсем нумайěшě тырă вырни çинчен сахал мар çыраççě, анчах кěрхи ака тата государствăна тырă парас ěç мěнле пыни çинчен пачах та çителěксěр çыраççě. Ăна çак фактсенчен те курма пулать: Вăрмар районěнче çěнě тырра государствăна парасси августăн 5—6-мěшсенчех пуçланнă. Районри «Хěрлě ялав» хаçат вара августăн 8, 15, 19-мěшсенчи номерěсенче государствăна тырă парас ěç мěнле пыни çинчен пěртте çырмасть, пěр статьяра «çак кунсенчех авăн çапса государствăна тырă тăрелмалла» тесе асăннипе иртсе каять. Çавăн пекех Комсомольски районри «Октябрь ялавě» хаçат та (августăн 1—20-мěшсенчи номерсенче) ялхуçалăх продукчěсене хатěрлев пункчěсене парас ыйтупа икě заметка кăна пичетлет. Кусем иккěшě те çиелтен çырнăскерсем.

Çаксенчен ěнтě уйрăм хаçатсем уборка мěнле пыни çинчен калакан фактсене регистрацилесе çеç пыни курăнать. Кунсăр пуçне, районри хаçатсем чылайěшě çěрěç пайěсенчен илнě сводкăсем тăрăх статьясем çырниех лăпланса лараççě.

Районри хаçатсемпе стена хаçачěсем тырпулсене пухса кěртес ěç çинчен çырнă чухне çак ыйтусем тěп вырăнта тăмалла: комбайнсемпе, тракторсемпе, молотилкăсемпе тата çăмăл машинăсемпе кунěн-çěрěн ěçлесси; уборкăра çавасемпе тата çурласемпе вырас, тăпачăпа авăн çапас ěçсене лайăх йěркелесси; горючие перекетлесси; уборкăра ěçлеме колхозниксене, хуларан пынă ěççыннисене пурне те хутшăнтарасси; уборкăна ăнăçлăн, пěр тăкаксăр ирттерес тата государство умěнчи обязательствăсене срокченех пурнăçа кěртес тěлěшпе социализмлă ăмăртăва организацилесси. Çавăнпа пěрлех хаçатсен страницисем çинче ěçри дисциплина, тырпула хуралласси çинчен çырнă статьясем валли вырăн тупăнмалла.

Хаçатсенче «Ялхуçалăхěнчи ăмăртура малта пыракансен хисеп хăми» тата «Тырпулсене пухса кěртес ěçри опытпа паллаштармалли трибуна» пулмалла. ВКП(б) Елчěк райкомě районри «Колхоз ялавě» хаçат çинче «Хисеп хăми» тума йышăннă. Çав хăма çине малта пыракан колхозсем, колхозниксемпе колхозницăсем çинчен çырса пыраççě. Çакă ěнтě, паллах, усăллă ěç. Кунпа пěрлех хаçатсен политикăллă-массăллă ěç мěнле пыни çинчен те çырса пымалла, уборкăри çитменлěхсене, колхозсенчи кахалсене хытă критиклемелле.

Кашни хаçатăнах тырпулсене пухса кěртес тата государствăна тырă парас ыйтусене оперативно çутатса пырас пулать. Ун чухне вара пирěн хаçатсем ялхуçалăхě умěнче тăракан çак пысăк ěçсене ăнăçлăн пурнăçа кěртме нумай пулăшěç.

Колхозниксемпе колхозницăсем, МТС работникěсем!

Тырпулсене пухса кěртес ěçěн хăвăртлăхěсене вăйлатар, кěракине хăвăрт туса ирттерсе килес çулти вăйлă тырпул никěсне хывар!

Комбайнпа тырă пухса кěртес ěçěн мастерěсем

Комбайнер Иван Михайлов талăкра 23-шер гектар тырă пухса кěртет

ÇĚМЕРЛЕ, августăн 25-мěш. (Телефонпа). МТС-ри трактористсемпе комбайнерсем хушшинчи социализмлă ăмăрту лайăх результатсем парать. Комбайнпа тырă пухса кěртес ěçěн мастерě Иван Михайлов талăкра вăтамран 20—23 гектар тырă пухса кěртет. Вăл хăйěн комбайнне пěр минута та пушă лартмасть. Михайлов кăçал «Новая жизнь» колхозăн хирěнче ěçлерě, 260 гектар тыррине вырса пухрě. Планпа унăн 80 гектар çинчи тырăсене пухса кěртмеллеччě. Çавăн пекех Чекменевпа Мумиков комбайнерсем те тырă вырса пухмалли плана ирттерсе тултарнă. Чекменев юлташ 135 гектар, Мумиков юлташ—130 гектар çинчи тырăсене вырса пухнă.

Ěнерхи кун тěлне комбайнсемпе пурě 820 гектар вырса пухнă, çакă вăл МТС комбайнсемпе тырăсене вырса пухас плана 114 процент тултарни пулать.

Р. ЕВГРАФОВ,
МТС политотдел начальникěн заместителě.

Тимофеев юлташпа танлашăр

ШАХАСАН, августăн 25-мěш. (Хамăр корр.). Августăн 23-мěш тěлне МТС комбайнсемпе 1.110 гектар çинчи тырăсене вырса, плана 72 процент тултарнă. Комбайнпа тырă пухса кěмелли плана 5-мěш, 10-мěш тата 13-мěш бригадăсем пěтěмпех тултарнă. 5-мěш бригадăри комбайнер М. Тимофеев юлташ планпа 110 гектар тыррине вырса пухас вырăнне 195 гектар вырса пухрě. 12-мěш трактор бригадинчи комбайнер-коммунист Иван Моисеев, кăçал 300 гектар тыррине вырса пухма обязательство илнěскер, 115 гектар ытла вырса пухрě. Вăл тăтăшах талăкра 17—22-шер гектар тырă пухса кěртет. 10-мěш бригадăри комбайнерка В. Васильева юлташ та хăйěн комбайнěпе 130 гектар пухса кěнě.

Кая юлса пыракансем те пур-ха. 8-мěш бригадăри комбайнер Александр Шуркин уборка пуçланнăранпа та 20 гектар, комбайнерсем П. Кашин, Т. Яковлев, А. Григорьев—40-шер гектар тыррине çеç вырса пухнă. Тÿсме çук начар ěçлекен Шуркин уборкăра 150 килограмм горючи ытлашши расходланă.

Трактористсенчен уйрăмах Н. Савкин, М. Анисимова юлташсем лайăх ěçлеççě. Вěсем тырă вырма тухнăранпа 48-шар килограмм горючи перекетлесе хăварчěç. А. Платоновпа Н. Аввакумов трактористсем кěракинче паха тěслěхсем кăтартаççě. А. Платонов тракторпа тумалли ěçсен çулталăк планне ирттерсе тултарнă. Унăн СТЗ тракторпа, çемçе суха çине куçарса, пурě 224 гектар сухаламалла пулнă. Вăл 277 гектар сухаланă, 225 килограмм горючи перекетленě. Аввакумов юлташ та çулталăк планне 127 процент тултарнă.

С. ШАДИН.

ÇАМРĂК МАШИНОВЕД

ÇĚМĚРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Пояндайкинăри туллимар вăтам шкулта вěренекенсенчен хăшпěрисем çураки вăхăтěнче плугарьсем, сÿреçěсем пулса ěçленě. Вěсем кашниех ěçре пример кăтартнă. 7-мěш класра вěренекен Илья Поклаков сухаç пулса ěçлесе кашни кунах нормăна ирттерсе тултарнă, 1,5—2 ěçкунě туса пынă. Çав класра вěренекенсемех Валентин Ильдеменов, Илья Улисов тата Василий Яковлев куллен ěçре пример кăтартаççě, вěсем çăва тухнăранпа кашниех 70-шер ěçкунě тунă.

7-мěш класра вěреннě В. Яковлев кěске вăхăт хушшинчех машиноведсен курсěнчен вěренсе тухрě, халě вăл колхозра лайăх ěçлекен машиноведсенчен пěри. Унăн ěç тухăçлăхě кунран кун ÿссе пырать.

Шкул ачисем уборка пуçланас умěн пěр-пěринпе социализмлă ăмăртăва тухса колхоз уйхирěнче стахановла ěçлеме, çирěп дисциплинăллă пулма сăмах пачěç. Халě вěсем хăйсен сăмахне тивěçлěн пурнăça кěртсе пыраççě.

Пионер Петя Егоров 120 ěçкунě тунă

Шăмăршă районěнчи «Победа» колхозри пионер Петя Егоров колхоз ěçěсене кăçал активлăн хутшăнса ěçлерě. Вăл 120 ěçкунě тунă. Кěçех вěренÿ çулě пуçланать. Çавăнпа Петя хăйěн ěçкунěсен шутне ÿстерессишěн халě уйрăмах çине тăрса ěçлет.

Çěршыв умěнчи хăйсен тивěçне туйса, ытти пионерсем те лайăх ěçлерěç.

ВАСАН МИШШИ.

Кěраканче фронтри пек ěçлемелли пилěккунлăх

Малтанхи кун итогěсем

КУКЕÇ, августăн 25-мěш. (Телефонпа). Кěрхи тырăсене партипе правительство кăтартса панă срокра тата планран ирттерсе акса хăварассишěн кěрешěве тухнă колхозсемпе колхозниксем августăн 24-мěшěнчен пуçласа августăн 29-мěшне çитиччен фронтри пек ěçлемелли пилěккунлăх туса ирттерме сěнÿ пачěç. Ăна ВКП(б) Чăваш Обкомě ырларě. Ěнер, пилěккунлăхăн малтанхи кунěнче, районри колхозниксем ытти чухнехинчен тухăçлăнрах ěçлерěç. Августăн 23-мěшěнче район кěрхи тырăсене 600 гектар акнă пулсан, ěнер 800 гектар акса хăварчě. Кěрхи тырра акас ěçе «Шăнкас», «Осоавиахим», «Правда», «Урожай» колхозсем—пурě 6 колхоз вěçлерě. Паянхи кун тěлне район кěрхи тырăсене пěтěмпе 6.064 гектар çине акса, плана 66 процент ытла тултарчě.

Пилěккунлăх уйрăмăнах Крупская ячěпе тăракан колхозра (колхоз председателě Кудряшов юлташ) организованно пырать. Ку колхоз кěрхи тырăсене августăн 28-мěшěнче акса пěтерме, планран ирттерсе 22 гектар акса хăварма обязательство илнě. Планран ирттерсе «Крахмал» колхоз 6 гектар, «Урожай»—5 гектар, «Первое мая»—12 гектар акаççě, районěпе пурě 200 гектар ытла акса хăварма обязательство илнě.

Кунпа пěрлех эпир уборка ěçěсене те ăнăçлăн туса пыратпăр. Августăн 24-мěш тěлне район пучахлă тырăсене вырас плана 74 процент тултарнă. «Перелом», «Правда» тата «Осоавиахим» колхозсем çуртырри вырса пěтерчěç.

Ворошилов ячěпе тăракан колхоз членěсем пурте, пěр çын юлмиччен, ěçе тухаççě, уйхирте талăкра 16 сехет хушши тухăçлăн ěçлеççě.

Район кěлте кÿрес, авăн çапас тата государствăна тырă парас ěçсене те манса хăвармасть. Ěнерхи кун тěлне районри колхозсем 4.047 гектар çинчи кěлтесене кÿрсе капана хыврěç, 2.500 гектар тыррисене çапса кěртрěç, государствăна 400 тонна ытла çěнě тырă пачěç. Государствăна тырă тăратас обязательствăсене Солянрово ялсоветěнчи, «Осоавиахим», Ворошилов ячěпе тăракан колхозсем кěçех пурнăçлаççě.

Кěрхи тырăсене хăвăртрах тата планран ирттерсе акас тěлěшпе пуçланнă фронтовой пилěккунлăха хутшăнса хамăр çине илнě обязательствăсене пурнăçлассишěн эпир çине тăрса ěçлетпěр.

В. КАРАУШЕВ,
ВКП(б) райкомěн секретарě.

Пилěккунлăха хутшăнтăмăр

КУСЛАВККА, августăн 25-мěш. (Телефонпа). Кěраки ěçěсене хăвăртрах вěçлес тěлěшпе республикăра пуçланнă фронтри пек ěçлемелли пилěккунлăха районри пур колхозсем те хутшăнчěç. Çак пилěккунлăхра район кěртыррисене планран ирттерсе 300 гектар акса хăварать.

Августăн 24-мěш тěлне районěпе кěрхи тырăсем пурě 5.308 гектар çине акнă, çакă вăл акмалли лаптăкăн 55,9 процентě пулать. Кěрхи тырăсене районри 3 колхоз пěтěмěшпех акса пěтерчěç.

Ака ěçěсем районра юлса пыраççě. Çакна шута илсе, эпир колхозсене кашни кунхи заданисем çирěплетсе патăмăр. Фронтовой пилěккунлăха хутшăннă хыççăн, çак заданисене чылай колхозсем ирттерсе тултарма тытăнчěç. «Первое Мая» колхозăн задани тăрăх куллене 14 гектар акмалла, вăл ěнер 18 гектар акрě. Çавăн пекех «Коммунизм» колхоз та талăкра 9 гектар акас вырăнне 12-шер гектар акса пыма тытăнчě.

Кěртыррисене акнă çěрте районěпе 140 сеялка ěçлет. Анчах, пěтěмěшпе илсен, сеялкăсене туллин ěçлеттерни çук-ха. «III Интернационал» колхозра сеялкăсене май пур таранах ěçлеттерессишěн кěрешмеççě. Унта кěрхи тырăсене акас ěç ытла та юлса пырать. Акакансем ěçе ир тухмаççě, ěçрен каç пуличченех тавăрăнаççě. Акари лашасене начар пăхнă пирки, унта икě касăллă плугпа кунне 0,8-шар гектар çеç сухалаççě. Çак çитменлěхсем колхоз председателě Глебов тата ВКП(б) райкомěпе райсовет исполкомěн уполномоченнăйě Остроумов куçě умěнче пулса иртеççě. Анчах вěсем асăннă çитменлěхсене пěтермеççě, кěракине вăраха тăсса пыраççě. Колхозăн планпа 260 гектар акмалла пулсан, паянхи кун тěлне 90 гектар çеç акнă.

«Победа» колхозра ялхуçалăх ěçěсене «черетпе» туса пыраççě. Çак колхоз çуртырри вырас, кěлте кÿрес, государствăна тырă парас ěçсене вěçлесе пырать. Кěрхи тырăсене акма вăл августăн 21-мěшěнчен тухрě. «Трактор», «Красная Чувашия» колхозсенче малтанхи кунсенче тырăсене машинăпа акассине хирěçле шухăшсем пулнă. Унта сеялкăсем пур çěртенех кěрхи тырăсене алăпа акнă.

Фронтовой пилěккунлăхра ытти ялхуçалăх ěçěсен хăвăртлăхне те чакармалла мар. Августăн 24-мěш тěлне район пучахлă тырăсене 11.007 гектар çинчен вырса пухрě, плана 69 процент тултарчě. Çуртыррисене вырас ěç «Красный курган», «Ленинский призыв», «Первое мая» колхозсенче ăнăçлăн пулса пырать. «Первое Мая» колхоз çуртыррисене вырас, кěлте кÿрес, авăн çапас тата кěрхи тырăсене акас ěçсене организованно туса пырать. Унти колхозниксем çěр каçах авăн çапаççě, кунěпе тырă выраççě.

Н. ЛЬВОВ,
ВКП(б) райкомěн секретарě.

Кěраки планне район 79 процент тултарчě

ХĚРЛĚ ЧУТАЙ, августăн 25-мěш. (Телефонпа). Район кěраки ěçěсене хăвăртрах вěçлес тěлěшпе фронтри пек ěçлемелли пилěккунлăха хутшăнса кěрхи тырăсене акас ěçе августăн 29-мěшчен вěçлессишěн кěрешěве тухрě. Паянхи кун тěлне район кěрхи тырăсем акас плана 79 процент тултарчě. Районри 7 колхоз кěрхи тырăсене акса пěтерчěç, планран ирттерсе вуншар гектар акса хăварчěç. «Коминтерн» колхоз планран ирттерсе 33 гектар, «Мотор»—40 гектар, «Трактор»—17 гектар, Чкалов ячěпе тăракан колхоз—35 гектар акрěç. Ака ěçěсем «Профинтерн», «Прогресс», «Новая жизнь», «Пятилетка» колхозсенче те çак кунсенчех вěçленеççě.

«Мотор», «Коминтерн» колхозсем кěрхи тырăсене акнă çěрте сеялкăсене йěркеллě ěçлеттерчěç. Анчах Киров, Буденный ячěпе тăракан колхозсен руководителěсем ку таранччен сеялкăсене туллин ěçлеттерме тăрăшмаççě-ха.

Колхозниксен ěçри хастарлăхě кунсеренех ÿссе пырать. «Чăваш Коммуни» колхозри Пантелеймон Иванов икě касăллă плугпа тăтăшах 1,5 гектар сухаласа, ěç нормине ытлашшипех тултарать.

Августăн 24-мěш тěлне район пучахлă тырăсен 85 процентне вырса пухрě. ВКП(б) ячěпе тăракан колхоз (колхоз председателě Гурьянов юлташ) çуртыррисене вырса пěтерчě.

ВКП(б) райкомěпе райсовет исполкомě районри колхозсенче уборкăри ěçсен пахалăхне сăнаса тăма 53 çынна пахалăх инспекторěсем пулма çирěплетнě. Вěсем тăккаланчăка хирěç кěрешес ěçе туса пыраççě. Инспекторсенчен уйрăмах Степанов, Васюков, Ястребов, Еремеев юлташсем лайăх ěçлеççě. Вěсем пурте ялхуçалăхне лайăх пěлеççě, унти кашни ěçе юратса тăваççě. Кунсăр пуçне пучах пухма районра шкул ачисенчен 54 отряд организациленě.

«Агроном» колхозри шкул ачисен отрядне учительница Авдеева юлташ ертсе пырать. Çак отряд августăн 17-мěшěнчен вара 16 гектар çинчи пучахсене пухса илнě.

М. КУЗЬМИН,
ВКП(б) райкомěн секретарě.

Планран ирттерсе 15 гектар

ВĂРНАР. Тула облаçěнчи Серебряные Пруды районěнчи «Заря» ялхуçалăх артелěн членěсем кěрхи тырăсене планран ирттерсе акса хăварма чěнсе каланине районри колхозниксем пěр кăмăлпа ырлаççě.

— «Заря» ялхуçалăх артелěн членěсем кěрхи тырăсене планран ирттерсе акса хăварас тěлěшпе пархатарлă ěç пуçарчěç,—теççě Кěçěн Кипекри «Память Ленина» колхоз членěсем.—Эпир вěсен пуçарăвне ырласа, фронт валли оборона гектарěсем акса хăваратпăр.

Колхозăн кăçал кěрхи тырăсем планпа 260 гектар акса хăвармалла. Чěнěве сÿтсе-явнă хыççăн, колхозниксем халиччен усă курман тата ирхи çěрулми кăларнă хыççăн пушанна çěр çине планран ирттерсе 16 гектар кěртыррисем акса хăварма йышăнчěç. Ака ěçěсем ăнăçлăн пулса пыраççě.

Л. СЕЛЕЗНЕВА

Агитациллě ěçе хак памаççě

ИЕПРЕÇ. Партипе комсомолăн уйрăм организацийěсем агитаци ěçне начар организациленě. Ку шута партипе комсомолăн «Правда» колхозри организацийěсене (секретарěсем А. Синдячкинпа Н. Иванов) кěртме пулать

«Правда» колхоза коммунист К. Карпов ертсе пырать. Кашни бригада çумне уборка вăхăтěнче колхозниксемпе пěрле уйра ěçлеме агитаторсене çирěплетнě. Кунта уборкăна организацилесе ăна ертсе пыма вăй çителěклě. Уборка ěçěсем кăтартуллă пулса пымалла пек. Анчах та «Правда» колхозра ыраш вырма 3—4 кун кая юлса тухнă, малтанхи кунсенчех жнейкăсене ěçе ямаççě, вěсене тырă вырма тухсан виççěмěш кунěнче тин уя илсе тухнă. Икě лобогрейка пур. «Вěсемпе ыраш вырма май çук» тесе, пачах та ěçлемен. Кěреплеллě çавасем 12 туса хатěрленě пулнă, вěсемпе те усă курман. Çапла вара, тырра çурлапа ытларах вырнă пирки кěрхи тырăсене вырас ěç августăн 18-мěшěнчен пынă, план тăрăх 8 кунта вырса пěтерме пăхнă пулсан, 20 ěç кунěнче тин вырса пěтернě, çумăр çунине ěçлемен кунсене кăларса пăрахсан та ыраш вырасси 16 ěç кунне пынă.

Районри чылай колхозсем çуртрисем выраççě. «Правда» колхозра та çуртрисем пулса çитрěç. Колхозри руководительсем пěр именмесěрех: «çуртрисем писсе çитмен-ха», тесе ларчěç. Кунта çуртрисене вырма та 3—4 кун кая юлса тухрěç. Çавăнпа çурхи тырăсене вырса пухассипе те колхоз кая юлас хăрушлăх пур.

Çак асăннă çитменлěхсем коммунистсемпе комсомолецсен куçě умěнчех пулса пыраççě. Пуçламăш парторганизаци коммунистсемпе комсомолецсене бригадăсем çумне çирěплетнě те çавăнпа лăпланса ларнă, вěсен ěçне, уборка ěçěсем мěнле пынине тěрěслесе тăман. Агитаторсенчен уйра Е. Игнатьева, Н. Иванова тата райкомран янă агитатор К. Алексеева кăна йěркеллě ěçлеççě, ыттисем вара хăйсен ěçне кăтартса парайман. Учительница В. Румянцева: «манăн ачасем пур, çавăнпа та уя тухма пултараймастăп» тесе, ěçрен пăрăнса юлнă. Çав вăхăтрах вăл ачисене колхоз яслине хăварса ěçе хутшăнма пултарнă. Колхозри стена хаçачě уборкăри ěçěн организаторě пулса тăман, уборка пуçланнăранпа ăна пěр номер кăна кăларнă, бригадăсенчи хаçатсем иккěшер номер кăна тухнă.

«МОПР» колхозра агитколлектив пур, ăна шкул директорě Н. Сапаркин ертсе пырать. Агитаторсем 12 çын шутланаççě. Агитаци ěçне уя куçарас тесе, уборка пуçланас умěн кашни агитатора уйрăм бригадăсем çумне çирěплетнě. Вěсене уйра колхозниксемпе пěрле ěçлесе агитаци ěçне туса пыма хушнă. Хăшпěр агитаторсем аван ěçлеççě. М. Яковлева шкул ачисен отрядне уборкăра ертсе пырать. Хăй тырă вырать машинăпа вырнă тырра ачасем кěлтене çыхаççě, пучахсене пухаççě. Каннă вăхăтра Яковлева юлташ колхозниксене хаçатсемпе журналсем вуласа парать. С. Терентьева та çавăн пек ěçлет. Çав вăхăтрах М. Максимова агитатор уборка пуçланнăранпа та уя тухса курман. Вăл ялсоветěн секретарě пулса ěçлет. Унăн кашни кун уя тухса колхозниксене хаçатсемпе журналсем вуласа пама май пулнă. Анчах та ялсовет председателě Кириллова, «канцеляринче ларакан çук» тесе, Максимовăна уя кăларман. Агитколлектив руководителě Сапаркин хăй те уйра сахал пулать, агитаторсен ěçне тěрěслесе тăмасть.

«Правда» тата «МОПР» колхозсенче агитациллě ěçе вăйлатас пулать.

Д. МИХАЙЛОВ.

Хастарлă ěçлекен комсомолецсем

ШАМАРША. «Победа» колхоз кěр тыррисене виçě кун çурăра вырса пěтерчě. Çак ěçре колхозри комсомолецсем малта пычěç. Николай Вазановпа Петр Терентьев комсомолецсем жнейкăпа тырă вырнă çěрте кашни кунах нормăна 240 процент таран тултарса пычěç. Комсомолка Павлова ыраш вырнă çěрте нормăна 170 процент пурнăça кěртсе пычě. Вăлах ферма заведующийě пулса ěçлет.

Чеменев комсомолецăн бригади кěр тыррисене виçě кунта вырса пěтерчě, колхозăн куçса çÿрекен Хěрлě ялавне илма тивěçлě пулчě.

Уборка вăхăтěнче комсомолецсем 5 номер стена хаçачě кăларчěç, 6 хутчен калаçу ирттерчěç, колхозра ěçсем мěнле пыни çинчен кăтарту хăми çине çырса пыраççě.

П. КУЗЬМИН.

Бельгин Совет Союзěнчи посланникě г-н Р. Ван де Кершов д'Аллебас верительнăй грамотăсем пани

Августăн 24-мěшěнче СССР Верховный Совет Президиумěн Председателě М. И. Калинин юлташ Бельгин Совет Союзěнчи Чрезвычайнăй посланникпе тата Полномочнăй министрне г-н Р. Ван де Кершов д' Аллебаса йышăннă, г-н Р. Ван де Кершов д'Аллебас хăйěн верительнăй грамотисене панă.

Гитлерпа унăн компанийěн вăрă-хурахла çуртěнчи элекçěсем

Германири радио «Берлинри авторитетлă çар ушкăнěсем» каласа панине пěлтерсе, çав пěлтерÿ тăрăх, августăн 15-мěшěнчен пуçласа 25-мěшне çити, Кенигсберг, Данциг тата Хěвелтухăç Пруссири ытти хуласем çине вěçсе пырса тапăннă вăхăтра, совет авиацийě 136 самолет çухатнă иккен. Чăннипе илсен, Хěвелтухăç Пруссири хуласенчи çар объекчěсем çине вěçсе пырса тапăннă вăхăтра Совет авиацийě пěр самолет та çухатман. Пěр самолет хăйěн базине вăхăтра таврăнманни пулнă, ăна çухалнă тесе шутланă, анчах çак самолет та каярахпа тупăннă. Гитлерпа унăн компанийěн вăрă-хурахла çуртěнчи элекçěсен жуликла пěлтерěвě, пěррěмěшěнчен, нимěç хулисенчи çар объекчěсем çине совет авиацийě вěçсе пырса тапăнни ăнăçлă пулнине питех те ěненмелле кăтартса парать тата, иккěмěшěнчен, нимěçсен сывлăшран тапăннинчен хÿтěлемелли оборони вăйсăр пулни пирки вěсем çав тапăнусене чăрмантарма пултарайманнипе кăтартса пани пекех кăларать.

Совет самолечěсем вěçсе пырса тапăннине пула нимěçсен çар объекчěсем сывлăшалла сирпěнеççě, çунаççě, халăх пысăк çухатусем тÿсет, çав вăхăтрах совет авиацийěн çухатусем çук. Германи командованийěн ирěксěрех нимěç халăхне улталама лекет. Вырăссен çухатусем çук пулсан, вěсене шухăшласа кăларас пулать; нимěçсен сывлăшран тапăннинчен хÿтěлемелли оборони вăйсăр пулсан тата вăл пирěн самолетсемпе нимěн те тума пултараймасть пулсан, çав самолетсене элекçěсен черпил кěленчинче путарма хăтланса пăхас пулать. Путарма хăтланаççě те. Анчах çак ěç усăсăр. Эпир вěçсе пырса тапăннинчен çухатусем тÿсекен нимěçсене «Берлинри авторитетлă çар ушкăнěсен» суя пěлтерěвěсем вилнě çынна эмел пулăшнă пекех пулăшаççě, вěçсе кайса тапăннă çěре хутшăннă тата ним сиенсěр тăрса юлнă совет самолечěсем вара малалла та вěçе-вěçе кайса тапăнěç.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровěнчен

Августăн 24-мěшěнчи каçхи пěлтерÿ

Августăн 24-мěшěнче пирěн войскăсем противника хирěç **Клетскаяран** кăнтăр-хěвелтухăçнерехри, **Котельниковăран** çурçěр-хěвелтухăçри районсенче, çавăн пекех **Прохладный** районěнче тата **Краснодартан** кăнтăртарахра çапăçнă.

Фронтăн ытти участокěсенче паллă улшăнусемех пулман.

Финн заливěнче пирěн карапсем противникăн 7.000 тонна водоизмещениллě транспортне путарнă.

* * *

Августăн 23-мěшěнче пирěн авиаци чаçěсем фронтăн тěрлě участокěсенче нимěçсен 20 танкне çити, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 100 автомашинине ытла, боеприпассем тиенě 30 лавне çити пěтерсе тăкнă е сиенленě, боеприпассен 4 складне сирпěнтерсе янă, нимěçсен 6.000 тонна водоизмещениллě транспортне путарнă, противникăн пехотине 2 батальона çити сапаласа янă, пěр пайне пěтерсе тăкнă.

* * *

Клетская районěнче пирěн войскăсем активлă çапăçусем туса пынă. Н-ски часть атака туса нимěçсене çирěплетнě рубежран хěстерсе кăларнă, 2 оруди, 7 пулемет, 4 миномет, боеприпассен складне тата радиостанци тытса илнě. Çапăçу хирěнче тăшманăн 200 вилли ытла выртса юлнă.

Противникăн Дон шывěн сулахай çыранне каçнă танкěсемпе мотопехотине хирěç уйрăмах вăйлăн çапăçнă. Халăх пурăнакан пěр пункт патěнчи çапăçура нимěçсен 8 танкне, 6 автомашинине тата 400 гитлеровеца çити пěтерсе тăкнă.

* * *

Котельниковăран çурçěр-хěвелтухăçнерехри районра пирěн войскăсем противникăн пирěн оборонăна савăлланса кěнě танкěсемпе пехотин пысăк вăйěсене хирěç çапăçнă. Н-ски танковăй часть гитлеровецсене сасартăк пырса çапса нимěçсен 11 танкне, 8 противотанковăй орудине тата 300 салтакěпе офицерěнчен кая мар пěтерсе тăкнă. Чугунçул станцийě патěнче, минометсемпе пулеметсенчен персе, пирěн рубежсене атакăлама хăтланнă румынсен пехотине 2 ротăна çити пěтерсе тăкнă.

* * *

Краснодартан кăнтăртарахри районра противник, пěр участокра йышлă вăйсем пухса тăратса, пирěн чаçа хěснě, халăх пурăнакан 2 пункта йышăнса илнě. Тепěр участокра пěр кун хушшинче нимěçсен 150 салтакěпе офицерне ытла, йывăр артиллери батарейине тата минометсен 3 батарейине пěтерсе тăкнă.

Прохладный районěнче пирěн войскăсем противникăн танкěсемпе пехотине хирěç оборонăллă çапăçусем туса пынă. Совет бронебойщикěсем нимěçсен 4 танкне персе çěмěрнě.

* * *

Ленинград фронтěнче пěр участокра пирěн чаçсем гитлеровецсен темиçе атакине сирсе янă. 5 оруди, миномет батарейине, 9 станковăй пулемет пěтерсе тăкнă, пěр пайне 2 танкне персе çěмěрнě.

çěмěрнě тата противникăн боеприпассем усракан складне сирпěнтерсе янă. Противникăн 300 салтакěпе офицерě ытла вилнě е аманнă.

* * *

Августăн пуçламěш кунěсенче нимěçсен командованийě Ленинград облаçěнчи партизансене хирěç карательнăй пысăк экспедици янă. Темиçе пин гитлеровец, артиллерипе, танксемпе тата бронемашинăсемпе пěрле, партизансен В. тата О. юлташсем ертсе пыракан отрячěсене хупăрласа илме хăтланнă. Партизансем противника хирěç 2 эрне хушши кěрешнě, вěсем нимěçсен фашистла оккупанчěсене 600 çынна çити пěтерсе тăкнă.

* * *

Пирěн боецсем нимěçсен 256-мěш пехотнăй дивизийěнчи 520-мěш полкăн 2-мěш ротинчи ефрейтора Георг Стефана тыткăна илнě. Фашистла бандит çапла каласа панă: «Пире офицерсем кашни кун çапла калаççě: Россия вăл питě пуян çěршыв. Германия Российăна çěнтерсе илсе унăн пуянлăхне тытса илесшěн. Вырăссем ытла та йышлă. Халăхăн пěр пайне эпир вěлермěпěр, вěсем Германи валли ěçлесе тăччăр. Ыттисене пурне те вара нимěç çарě, ытлашши тата кирлě мар çынсем вырăнне хурса, вěлерсе пěтерě».

Нимěç çарě тÿсекен çухатусем çинчен калама тытăнса, гитлерла бандит хăйсен мěнпур преступленийěсемшěн малашне тавăрассинчен ытла та хăранине кăтартать. «Российăна хирěç пыракан вăрçа нумайěшě поход теççě,—тет вăл.—Çапла калани вăл тěрěс мар. Польшăпа Франције, Бельгипе Голландие эпир походпа кайрăмăр. Кунта вара юн юхтаракан çавтери хăрушă вăрçă пырать. Иккěмěш ротăра 2 уйăх хушшинче, çынсем хушса панине те шутласан, 160 салтакпа офицер стройран тухнă. Юлашки çапăçура кăна 32 çынна вěлернě, çав шутра лейтенант Курт Дитц, унтер-офицерсем Эрих Вольф, Карл Хейсцель тата Фриц Юрмшер вилнě. Вырăссем питě хаяррăн тата вăйлăн çапăçаççě. Вěсем малашне те çавăн пекех хаяррăн çапăçас пулсан, Германин калама çук пысăк çухатăвěсем пурте сая каяççě вара».

* * *

Брянск фронтěнчи участоксенчен пěринче кěрешекен Н-ски чаçри боецсем нимěçсене рощăран хăваласа кăларнă, унта асаплантарса вěлернě 17 красноармеецăн виллине тупнă. Фашистла ирсěрсем тыткăна лекнě красноармеецсен хăлхисене, сăмсисене касса татнă, 3 красноармеецăн кăкăрěсем çинче пилěк кěтеслě çăлтăрсем каса-каса кăларнă.

* * *

Казахстанăн кăнтăрти облаçěсенчи 12 районра колхозсем государствăна тырă тăратмалли плана пěтěмěшпех тултарнă. Джамбул, Кăнтăр Казахстан, Кзыл Орда облаçěсенчи ялхуçалăх артелěсем августăн 20-мěш тěлне Хěрлě Çар фондне 600 пин пăт ытла тырă хывнă.

Августăн 25-мěшěнчи ирхи пěлтерÿрен

Августăн 25-мěшěнче ыран тěттěм чух çěрле пирěн войскăсем противника хирěç Клетскаяран кăнтăр-хěвелтухăçнерехри, Котельниковăран çурçěр-хěвелтухăçнерехри районсенче, çавăн пекех Прохладный районěнче тата Краснодартан кăнтăртарахра çапăçнă.

Фронтăн ытти участокěсенче улшăну та пулман.

Клетскаяран кăнтăр-хěвелтухăçнерехри районра пирěн войскăсем Дон шывě урлă каçнă противникпа хирěç вăйлă çапăçусем туса пынă. [illegible] Пěр участокра Н-ски чаçри боецсем пěр кун хушшинче противникăн 6 атакине сирсе янă, 3 танкне персе çěмěрнě, [illegible] салтакпа офицерне пěтерсе тăкнă. Тепěр участокра [illegible]

Котельниковăран çурçěр-хěвелтухăçнерехри районра [illegible] противникăн 200 салтакне пěтерсе тăкнă. Тепěр участокра пирěн танкистсем [illegible]

Краснодартан кăнтăртарахри районра [illegible] 70 автомашинине [illegible] пěр ротине çити пěтерсе тăкнă.

Прохладный районěнче пирěн чаçсем [illegible]

Тепěр участокра пирěн боецсем, [illegible] противникăн [illegible] пěтерсе тăкнă.

сирсе янă. Нимěçсен 23 танкне персе çěмěрнě, 8 танкне персе тăкнă.

Çурçěр-Хěвеланăçри фронтре вырăнти çапăçусем пулса пынă. Темиçе участокра пирěн подразделенисем противникăн пехотин атакисене сирсе янă. [illegible] Пирěн артиллеристсем [illegible] нимěçсен 3 самолетне персе ÿкернě. [illegible] «Юнкерс-52» [illegible] 5 транспортнăй самолетне персе ÿкернě.

Смоленск облаçěнчи районсенчен пěринче кěрешекен партизансен М. юлташ ертсе пыракан отрячě [illegible] 3 эшелона [illegible]

Партизансем вěлернě нимěç офицерě [illegible] Белоруссири партизансене [illegible]

Нимěçсен фашистла захватчикěсем тыткăна лекнě совет çыннисене вěлерсе пěтереççě. Орел облаçěнчи [illegible] гитлеровецсем 5 кун хушши [illegible] çынна ытла персе пăрахнă.

* * *

Кот д'Ор департаментěнче (Франция) юлашки вăхăтра хресченсем 18 склада [illegible] Францири нумай ялсенче хресченсем оккупантсене ялхуçалăх продукчěсене [illegible]

Пěтěм Союзри социализмлă ăмăрту

Малти вырăнтах юлассишěн

Оборонăн Государственный Комитечěн куçса çÿрекен Хěрлě ялавне илнě Н-ски завод август уйăхěнче ěç графикне талăкран талăка ăнăçлăн тултарса пырать. Çав вăхăтрах хăйěн производствине урăхлатса çěнетсе, пěр халăх комиссариачě валли çěнě йышши изделисем туса кăларма тытăнчě.

Хěрлě ялавлă коллектив, иртнě уйăхсенчи социализмлă ăмăртура мала тухнипе хавхаланнăскер, августра татах та нумайрах продукци парассишěн тăрăшать. Хăшпěр халăх комиссариачěсене тăратмалли продукцие задани панă чухлě туса кăларнă та ěнтě. Уйăх вěçленнě çěре заданисене кашни изделисем тăрăхах пурнăçлать.

Туса кăларнă продукцин пахалăхě те уйăхсеренех лайăхланса пырать. Июньпе июль уйăхěсенчи изделисене пěтěмпех йышăннă. Пахалăх начар пирки заказчиксенчен япăх сăмах илтни ку таранччен пулман.

Продукци пахалăхне лайăхлатас тесе инженерсемпе техниксем тěрлěрен майсемпе усă кураççě. Çав майсенчен пěри вăл—изделисен конструкцине кирлě еннелле улăштарса пыни пулать. Сăмахран, пěр массăллă изделин конструкцине тепěр изделин конструкципе улăштарнă та, ěç тухăçлăхě те ÿснě, ěç пахалăхě те лайăхланнă. Уйрăм детальсене пěтěçтермелли майсене çěнетсе пыни те продукцие лайăх туса кăларма пулăшать. Техникăна тěрěслесе тăракан работниксем çěнě продукцин пахалăхне пěррěмěш детальренех, массăллăн кăларма пуçличченех, пăхаççě. Çапла туни брак пуласситчен хăтарать, йăнăшпа çийěнчех тÿрлетме пулăшать.

Пахалăхшăн кěрешнин ырă примерне уйрăмах Цфасман юлташăн цехě кăтартать. Цех панă изделисене техникăллă контроль отделě яланах лайăх тата отлично хак парса йышăнать.

Заводри цехсенчен, яланхи пекех, Кинзбургский юлташăн цехě малта пырать. Ку цех июльри плана срокчен тата ирттерсе тултарнăшăн заводăн куçса çÿрекен Хěрлě ялавне илнě. Коллектив çак ялава август уйăхěнче те аларан вěçертме шутламасть. Декадăри заданисене ытлашшипех тултарать, продукцие ÿссе пыракан хăвăртлăхпа кăларса тăрать. Талăкри график — цех коллективěн законě, кашни работникпа работница ăна тěрěс те тикěс пурнăçласа пырать. Инженерсемпе мастерсем уйрăм звеносен руководителěсен кěске канашлăвне тăтăшах ирттереççě. Вěсенче пěр кунхи ěçсене пěтěçтерсе тухаççě, пур пек çитменлěхсене пěтермелли майсене палăртаççě.

Кинзбургский юлташăн цехě социализмлă ăмăртура производствăна мěнле организацилесе ертсе пымаллин примерне кăтартать. Ытти цехсем ун пек ěçлеме вěренеççě.

Н-ски заводăн коллективě Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртура малти вырăнтах юлассишěн, Хěрлě ялава алăрах хăварассишěн хăвăртлăхсене чакармасăр ěçлет.

Т. ИВАНОВ.

Вăрман хатěрлевне ěç вăйě çителěклě памалла

ЙЕПРЕÇ. Чугунçул транспорчě валли вутă хатěрлес тěлěшпе Йěпреç леспромхозěнче 4 район—Шупашкар, Канаш, Октябрьски тата Йěпреç районěсем ěçлеççě. Уйрăмах çак ěçе Йěпреç районě лайăх тытăнчě. Вăрманта ěçлекенсене çителěклě уйăрса панă, халě вěсем пысăк хастарлăхпа ěçлеççě. Вăрман хатěрлес плана срокчен тултарас тесе, Йěпреç районěнчи колхозниксем Канаш районěнчи колхозниксене ăмăртăва чěнчěç. Ăмăртура йěпреçсем малта пыраççě. Вěсем 7.746 кубометр касса, 6.279 кубометр турттарса хатěрленě. Уйрăм рабочисем, касакансемпе турттаракансем, вăрçă вăхăтěнчи пек тухăçлă ěçлеççě. Партин XVII-мěш съезчě ячěпе тăракан колхозран пынă В. Чураков юлташ механизациленě пăчкăпа кашни кун 2 кубометр вырăнне 5 кубометр касса хатěрлеть. Çапла вăл уйăхри заданирен ирттерсе 20 кубометр хатěрленě. «Красный металлист» колхоз членě Л. Афанасьев юлташ турттарас нормăна 200 процент, «Большевик» колхоз членě Т. Купцов юлташ—250 процент тултарать. Йěпреç районěнчен пынă 111 çынран 48-шě нормăна 150 процент тултарса ěçлеççě.

Вăрманта ěçлекен комсомолецсемпе çамрăксем хăйсен стахановла бригадине организациленě. Вěсем тухăçлă ěçěн примерне кăтартаççě. Комсомолец В. Воробьев юлташ, «Çěнě пурнăç» колхозран пынăскер, вутă хатěрлес плана 150 процент тултарать. 16 çулти çамрăк В. Егоров та турттарас ěçре ытти колхозниксенчен юлмасть.

Ăмăртура малта пыракансен ěç результачěсене кăтарту хăми çине кěртетпěр, вěсем çинчен стена хаçатěнче çыратпăр. Агитаторсемпе вулавçăсем вăрманта ěçлекенсене тěнчери лару-тăру çинчен, фронтри çěнě хыпарсем çинчен пěлтерсе тăраççě.

Чугунçул валли вутă хатěрлес ěçěн ăнăçлăхě районсем ěç вăйě мěнле парса тăнинчен килет. Ку тěлěшпе уйрăмах Канашпа Октябрьски районсем юлса пыраççě. Канаш райсовет исполкомě халиччен те ěç вăйě çителěклě таран уйăрса памасть. Çавăнпа Канаш районě вутă хатěрлевěнче чи кайра пырать. Августăн 24-мěш тěлне вăл 586 кубометр касса, 564 кубометр турттарса хатěрленě çеç. Октябрьски районăн ěçěсем те çавăн евěрлех.

Чугунçул транспорчě валли вутă хатěрлесси—оборонăллă ěç. Ăна вăхăтра пурнăçа кěртес пулать.

П. ФЕДОРОВ,
Йěпреç леспромхоз директорě.

Торф кăлармалли çулталăкри плана тултарнă предприятисем

ÇĔМĔРЛЕ, августăн 25-мěш. **(Телефонпа, хамăр корр.).** Торф кăларакан предприяти уйăхри ěç планне августăн 24-мěш тěлне 147 процент тултарчě. Çирěм тăватă кун хушшинче вăл 2.940 тонна торф кăларчě. Рабочисем, ăмăртса ěçлесе, пысăк ěç тухăçлăхě кăтартрěç. Стахановкăсенчен Лаптенкова юлташ уйăхри задание 303 процент, Ордикова—293, Трифонова—285, Тихонова—269, Милина—282, Толстова—221 процент тултарнă.

Паян предприяти çулталăкри ěç планне тултарчě. Çак çитěнěве вěсем социализмлă ăмăртăва хутшăнса турěç.

* * *

ЕТĔРНЕ. Хулари предприятисемпе учрежденисем валли хěл каçма топливо çителěклě хатěрлесе парас—çакăн пек ěмěтпе ěçлеççě Етěрнери торф кăларакан предприятири рабочисемпе работницăсем. Вěсем, пěр-пěринпе социализмлă ăмăртăва тухса, торфа заданирен ирттерсе хатěрлессишěн кěрешеççě. Коллектив 1942 çулта торф кăлармалли плана августăн 20-мěш тěлне 122 процент тултарчě, планран ирттерсе 220 тонна торф хатěрлерě.

* * *

ЕЛЧĔК. Çулталăкри план тăрăх районри торф предприятийěн 800 тонна торф кăлармалла пулнă. Августăн 20-мěш тěлне 1.082 тонна кăларнă, предприяти çулталăкри плана ытлашшипех тултарнă. Халě планран ирттерсе кăлараççě.

Шăлан çырли пухасси — оборонăллă ěç

Шăлан çырли пухас вăхăт çывхарать. Шăлан çырли вăл—этем организмне питех те кирлě С витаминăн концентратне тунă çěре каять. С витамин цынга чирě ересрен сыхланма тата çав чиртен сывалма кирлě. Çав витамин ытти чирсенчен сыхланма та, çавăн пекех вěсенчен сывалма та пулăшать. Вăл аманнă ÿт-тире çěнетме, чирлě çынсемпе аманнисене вăй хушма пулăшать. Çавăнпа шăлан çырлин халăх хуçалăхěнчи вырăнě халě татах та ÿсрě.

Эпир шăлан çырлине мěн чухлě ытларах пухатпăр, пирěн витаминсем тăвакан промышленность хамăрăн госпитальсемпе больницăсен нÿшисене тивěçтерме С витаминăн концентратне çавăн чухлě ытларах туса кăларать.

Чăваш республикинчи хатěрлев организацийěсен (чăвашсоюз хатěрлев контори, «Торгплодоовощь», «Росхмель», «Техлессемкультура»), апат-çимěç халăх комиссариачěн предприятийěсен, промартельсен т. ыт. те кăçалхи çул витамин тăвакан промышленность валли çěршер пăт шăлан çырли типěтсе хатěрлемелле.

Республикăри районсенчи хатěрлев пункчěсен, сельпосен, артельсен, колхозниксемпе колхозницăсен, комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен, шкул ачисен шăлан çырли пухас тěлěшпе нумай çулхи опыт пур.

Кăçал, отечественнăй вăрçăн иккěмěш çулěнче, çав опыта ěçе ямалла. Шăлан çырлине вăхăтра, тăкăнма памасăр пухса илмелле, ăна типěтсе витамин тăвакан промышленность валли хăвăрт тиесе ăсатмалла. Халě С витамин концентратне тумалли чěртаварăн—шăлан çырлин кашни центнерě, кашни килограмě тем пекех хаклă.

Хатěрлев организацийěсен шăлан çырли пухас тата ăна типěтсе хатěрлес ěçпе куллен, оперативно ертсе пымалла, çак ěçе политикăллă пысăк вырăна хурса хакламалла.

Шăлан çырлине пěтěм лаптăк пиçсе çитесси кěтмесěр, пиçсе çитнě уйрăм вырăнсенче пухма тытăнмалла. Пухса илнě шăлан çырлине çийěнчех типěтес пулать. Ăна пěр талăк типěтмесěр тăни те унăн пахалăхне чылай чакарать.

Шăлан çырлинчи С витамин тумалли япаласем август уйăхěн вěçěнче тата сентябрь уйăхěнче чылайрах пулаççě, мěншěн тесен ун чухне вăл лайăх пиçсе çитет. Çавăнпа шăлан çырлине çак уйăхсенче ытларах пухма тăрăшмалла. Çакна хатěрлев организацийěсен, шăлан çырли пухакансен асра тытмалла.

Çак оборонăллă кирлě ěçе тивěçлипе организацилеме хатěрлев организацийěсене партипе совет организацисен пысăккăн пулăшмалла. Шăлан çырли пухас тата ăна типěтес ěçсене тума хуласенчи, районсенчи тата ялсенчи ěççыннисене хутшăнтармалла.

ВЛКСМ Центральнăй Комитечě йышăннă тăрăх, комсомол организацийěсем, комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем, пионерсемпе шкул ачисем халě эмел курăкěсем пухас ěçе активлăн хутшăнаççě. Шăлан çырли ытларах пухасси—кашни комсомолецăн, пионерпа шкул ачин хисеплě тивěçě.

Шкул директорěсемпе ача çуртěсен директорěсем ку ěçе халех анлăн организацилеме тивěç.

Колхоз правленийěсемпе промартельсен руководителěсем, сельпо правленийěсем шăлан çырлине пухма, типěтме тата ăна кирлě çěре тиесе ăсатма колхозниксене, артельсенче ěçлекенсене, промкооператси членěсене анлăн явăçтарма тивěç.

Районсенчи хатěрлев организацийěсен шăлан çырли пухнă чухне тăтăшах ку ěçре пулăшу пама тивěçлě организацисемпе çыхăну тытса тăмалла.

Шăлан çырли пухакансем, çакна асра тытăр: шăлан çырли ытларах пухса, эсир нимěç захватчикěсене çěнтерме пулăшатăр!

Д. РОЗЕНШЕЙН.

Ют çěршывсенче

Гитлеровецсем Прибалтикăри хресченсенчен çěнě тырра пěтěмпех туртса илеççě

СТОКГОЛЬМ, августăн 24-мěш. (ТАСС). Гитлерла хаçатсем Прибалтикăри оккупациленě совет республикисенчи хресченсене кăçалхи тырра пěпěтěмпех нимěçсен влаçěсене памалла тесе асăрхаттараççě. Çапла, «Дейче дейтунг ин Осланд» хаçат пěлтернě тăрăх, Миттавăра «халăха çěнě тырра пухса кěртес ěçе хутшăнтарас» ыйтупа канашлу пулса иртнě. Çав канашлура гитлеровецсен «продовольстви комиссарě» çапла каланă: «пěтěм халăха тырă пухса кěртес ěçре ěçлеттермелле, вăл тырра нимěç çарне тăрантармашкăн памалла». Тырă пухса кěртес ěç çинчен çырнă статьяра çав хаçат хресченсене тырă тăратас ěçе тěплěн пурнăçа кěртмелли çинчен астутарать. «Эпир пěлетпěр,—тет хаçат, — ку вăл—пысăк жертва, мěншěн тесессěн хресчен хăйне кирлě таварсене сутăн илме кирлě укçана илеймест. Анчах та çак йывăр повинноçран никам та пăрăнса юлма пултараймасть». Хаçат çапла асăрхаттарса хăварать: нимěç çарě валли тырă парса, Прибалтикăри хресченсем «хăйсем ěçлекен çěре хăйсен аллинче тытса тăма право пуррине кăтартса памалла», тет.

Çак ыйтупа гитлерла чиновниксенчен пěри, Каунасра августăн 22-мěшěнче радио тăрăх тухса каланăскер, тата та уçăмлăрах каланă. Вăл çапла каланă: финсемпе нимěçсен çарě валли сěт пама хушакан приказа хресченсенчен 15 проценчě çеç пурнăçланă. Çав чиновник вăл приказа кирек мěн пулсан та пурнăçа кěртмеллине асăрхаттарса хăварнă. «Нимěнле уступка та пулмасть,—тенě вăл.—Халě вăрçă вăхăчě. Эпě сире çапла асăрхаттаратăп: сěтěн пěр пайне те пулин пытарса хăварма хăтланнăшăн та чи хаяр наказани паратпăр, хуçалăха, ěç выльăхне тата çуртйěре те тытса илме пулать. Рассейски тата ытти уездсенче сěт паман хресченсенчен вěсен çурчěсене туртса илнě ěнтě. Çакна асра тытăр, пире асăрхаттарман тесе ÿпкелешмелле ан пултăр».

Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçă

ЛОНДОН, августăн 24-мěш. (ТАСС). Англин авиаци министерствин коммюникинче çапла каланă: августăн 23-мěшěнче ирхине ирех противникăн самолечěсем Англин кăнтăр çыранěсенчи пунктсенчен пěрин çине бомбăсем пăрахнă, çав бомбăсем пăртак материальнăй сиен кÿнě. Вилнисемпе аманнисем çук. Кăнтăрла противникăн самолечěсем тепěр хут вěçсе килнě, вěсем çав çыранри пунктсенчен пěрне кăштах сиен кÿнě.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, августăн 24-мěш. (ТАСС). Лондонра официально пěлтернě тăрăх, августăн 23-мěшěнче кăнтăрла иртсен «Велингтон» йышши икě бомбардировщик Эмден порчě çине вěçсе кайса тапăннă. 1.200 метр çÿллěшне çити анса, летчиксем бомбăсем пăрахнă. Докра взрывсем пулнă.

Америка войскисен çěнě контингенчě Çурçěр Ирландие пыни

ЛОНДОН, августăн 24-мěш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пěлтерет: Америка войскисен темиçе пин çынлă контингенчě Çурçěр Ирландири портра аннă. Çав войскăсене суднăсен чи пысăк караванěсенчен пěри илсе пынă, çав караван Америкăн хěвелтухăç çыранěнчен хăçан та пулсан кайнă чи пысăк каравансенчен пěри пулса тăрать. Çурçěр Ирландие пынă войскăсем хушшинче истребительнăй авиаци летчикěсем тата специальнăй ěçсем тумалли войскăсем пур. Суднăсен караванě Атлантика океанě урлă пěр чăрмавсăрах каçнă.

Индири лару-тăру

ЛОНДОН, августăн 22-мěш. (ТАСС). Рейтер агентстви пěлтернě тăрăх, Индин чылай районěсенче урамсенче демонстрацисем пулса иртнě, тытăçса çапăçнисем те пулкаланă.

Инди правительстви çěнě распоряжени пичетлесе кăларнă, çав распоряжени тăрăх, стачкăсемпе локаутсем пуçласси çинчен икě эрне малтан пěлтермесен, вěсене законсăр япала тесе шутлаççě.

Германин Бельгири чаçěсенчен салтаксем тараççě

ЛОНДОН, августăн 23-мěш. (ТАСС). Информаци министерстви пěлтернě тăрăх, Германин нумай салтакěсем, вěсен чаçěсене Бельгирен Совет Союзěпе Германи хушшинчи фронта ярас умěн, тарса пěтнě. Дезертирсене хирěç кěрешес ěçе çăмăллатас шутпа, çар влаçěсем ятарласа ирěк памасăр гостиницăсемпе пÿлěмсенче салтаксене усрама чарнă.

САЛТАКСЕМ НИМĔÇ ХАЛĂХĔПЕ ХУТШĂНАССИНЧЕН ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ХĂРАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, августăн 23-мěш. (ТАСС). Аманса тата чирлесе Германие килнě салтаксем халăхпа хутшăнассине гитлерла влаçсем пур майсемпе те чăрмантарма тăрăшаççě. Фашистсен гитлерла пичечě кăтартса панă тăрăх, салтаксене хурлантарас мар тесе, халăхăн вěсемпе сахалтарах калаçас пулать. «Вăрçă пула тыл хěнхур курнине пěлме салтакшăн йывăр пулать,—тесе çырать «Кенигсбергер альгемейне цейтунг» хаçат.—Сывлăшран тапăннинчен хÿтěленессине пирěн лайăх организацилени тата эпир ăслă пулни çинчен шухăшлаттарсан, салтака çăмăлрах пулать». Çакăн вырăнне «салтаксене жалобăсемпе, сÿпěлтетнипе тата политикăллă элексемпе йăлăхтарса çитерекен» нимěçсене хаçат хытă айăпласшăн хăратать.

Испанири çивěч лару-тăру

ЛОНДОН, августăн 22-мěш. (ТАСС). Испанирен халě кăна килсе çитнě çынсем каласа панă тăрăх, Испанири лару-тăру нихăçан та хальхи пек çивěчленсе çитмен. Республиканецсем 1,5 миллион çынна яхăн тěрмере лараççě. Вěсен тăванěсемпе тусěсем Франко режимне хирěç тăракан çынсен пěр пайě кăна пулса тăраççě. Тěрмери çынсене кашни кунах пере-пере вěлереççě. Нумаях та пулмасть 500 çынна персе пăрахнă. Астури тăвěсенче çапăçусем пулса иртеççě, партизансен отрячěсем çирěплетнě районěсене фашистла войскăсем кěрсе каяймаççě.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Чувашскому агентству бланкоиздательства требуется на работу экспедитор-кладовщик.

За справками обращаться по адресу: Чебоксары, Канашская, 21.

Дирекция.

Чувашской конторе Сельхозснабжения срочно требуются главный бухгалтер и бухгалтер. Квартира предоставляется.

Обращаться: гор. Чебоксары, ул. Калинина, д. 34, тел. 0-94.

Поволжский Лесотехнический Институт имени Максима Горького (временно переведенный из гор. Йошкар-Ола Марийской АССР в поселок Мушкари,

продолжает прием студентов

на факультеты: а) механизации лесоразработок и транспорта леса (готовящий инженеров-технологов и инженеров водного транспорта леса) и б) лесного хозяйства (готовящий инженеров лесного хозяйства).

Отличники и все окончившие полную среднюю школу принимаются без экзамена. Остальные держат экзамены: поступающие на факультет механизации — по математике, физике, химии, русскому языку и литературе и иностранному языку; поступающие на факультет лесного хозяйства — по физике, химии, русскому языку и литературе.

Прием заявлений с документами до 1 сентября.

Принимаются заявления о переводе студентов из других ВУЗ'ов.

Институт имеет общежитие и столовую.

Отличники и участники отечественной войны получают стипендию.

Адрес Института: Кожла-Сола, Звениговского района, Марийской АССР. Поволжский Лесотехнический Институт имени Максима Горького.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарěн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайěн — 3—99, ялхуçалăх пайěн — 3—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1357

Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.